32-311

Н. ХАРИТОНОВ

# ҪАР— ЗЕТСЕН СЫХĔ



ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР 1932

Н. ХАРИТОНОВ

# ХĔРЛĔ ÇАР— СОВЕТСЕН СЫХĔ

ЂАВАШСЕН ПАТТАЛАХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР * 1932

Уполн. Главлита В-5144 Заказ № 2099 Тираж 6000 экз.

Книжная ф-ка Центриздата Народов СССР. Москва
Шлюзовая набережная, 10.

## Кăпиталисăм çĕршывĕсенҫе çар камшăн ĕçлет.

1914 çулта кăпиталиссем тĕнҫипех вăрçă пуçларĕç. Вĕсене хăйсен таварĕсене вырнаçтарма рынăк çитмен. Пĕтĕм тĕнҫе пысăк кăпиталисăмлă патшалăхсене пайланнă. Кăпитталиссем хăйсене кирлĕ рынăксене пĕр-пĕринҫен ирĕксĕр вăйпа анҫах туртса илме пултарнă. Ҫи хăрушă вăрçă Анклипе Кермани хушшинҫе пынă. Çав вăрă хурахсем патне Франтси те, Амерĕк те, Иттали те, Раççей те хутшăннă. Вăрçă тăвата çул хушши тăсăлҫĕ. Çав вăрçăра 10 мĕлйуна йахăн çын вилсе пĕтнĕ, 2 мĕлйун çын пĕр сас-хурасăр çухалнă. Вăрçăран 10 мĕлйун çынна йахăн аманса ĕçе йурăхсăр пулса таврăннă.

Вăрçăра кам çапăçнă-ха, кам вилнĕ? Паллах ĕнтĕ рапооҫҫисемпе хресҫенсем. Вĕсене кашни пуршуаçиллĕ патшалăх çара илсе вилме хăваланă.

Пупсем, патша çарĕнҫи ахвитсерсем салтаксене: „тĕне, патшана тата çуралнă

çĕршыва сыхламалла“, тесе хĕтĕртнĕ. Вырăс пуршуаçисемпе улпутсем ĕçхалăхсене улталанă. Раççейа нимĕççсем тапăннă, вĕсенђен сыхланмалла, тенĕ вĕсем. Кермани кăпиталисĕсем хăйсен салтакĕсене, пире акăлђансем, франтсуссем, вырăссем тапăннă, тесе хăйсен салтакĕсене хĕтĕртнĕ. Пĕтĕм çĕршыври пуршуаçи хăйсен салтакĕсене—есĕр хамăр çĕршыва сывă хăварасшăн çапăçатăр, тесе ĕнентернĕ.

Пуршуаçисен шанђăклă тарçисем — сотсиал - соклашаттĕлсем — салтаксене вилме, вăрçа хăвалама пулăшса тăнă. Пољшевиксем кăна В. И. Ленин кăтартса пынипе пуршуаçиллĕ ултава тăрă шыв çине кăларнă. Вăрçă вăхăтĕнђе пољшевиксем пĕтĕм тĕнђери ĕçхалăхсен тăванлăхĕшĕн кĕрешнĕ. Пољшевиксем ĕçхалăхне кăпитталиссен интересĕшĕн йунлă вăрçă вырăнне ђуралăхра тытса тăракансене хирĕç краштăн вăрçи пуçласа йама ђĕннĕ.

Анђах рапођђисемпе хресђенсем пуршуйсен ултавне лекнĕ. Пĕр-пĕрне тĕлленĕ ђух кашнийех хăйин çĕршывне сыхлатăп тесе шухăшланă.

Тĕрĕссипе вĕсем кăпиталиссен интересĕсемшĕн çапăçса вилнĕ.

Пуршуаçиллĕ патшалăхри çар, кăпитал влаçне сыхласа тăрать. Рапоӡӡисем пуршуаçийе хирĕç çапăçма тытăнсан кăпитталиссем револӡутсиллĕ йухăма путарма çарсем йараççĕ. Çав колонисенӡи ĕçхалăхĕсене пусмăрлăхра тытса тăма та пулăшса тăрать. Нумайах та пулмасть Интире анкли кăпиталисĕсене хирĕç револӡутсиллĕ йухăм хăпарӡĕ. Револӡутсионерсене пĕтерсе хумашкăн Анкли патшалăхĕ Интийе хăй çарне йаӡĕ.

Кăпитталиссене, влаçне тĕреклетме, çĕнĕ рынăксем турта-турта илме çар кирлĕ. Мĕн пур кăпиталисăмлă çĕр-шывсенӡе çар, пуршуаçи хĕçпăшалĕ пулса тăрса вĕсен интересĕшĕн çапăçать.

## Хĕрлĕ çар пире мĕншĕн кирлĕ.

Совет сойусĕнӡе влаç рапоӡӡи клас аллинӡе. Йут çĕрсене турта-турта илни, йе вăйсăр халăхсене пусмăрлăхра тытса тăни пире кирлĕ мар. Совет влаçĕ мирлĕ пурăнас политтĕка çирĕп тытса пырать. „Мирлĕ пурăнни пире сотсиалисăм тума кирлĕ. Анӡах епĕр хамăрăн сотсиалсăм-

лӑ строиттĕлствӑна вирлĕн сыхласа тӑмалла. Пĕтĕм тĕнҫери кӑпитталиссем тĕнҫери пĕртен-пĕр пролеттариллĕ патшалӑха пĕтерсе пӑрахасшӑн. Совет сойусĕнҫи рапоҫҫисемпе хресҫенсене вĕсем ҫĕнĕрен пусмӑрлӑха хĕстерсе хурасшӑн."

Октапĕрте ҫĕнтернĕ хыҫҫӑн йут патшалӑхри кӑпитталиссем, вырӑс фаприкканҫĕсемпе тата улпутсем пире хирĕҫ виҫĕ ҫул ҫапӑҫрĕҫ. Анҫах рапоҫҫи клас, комуниссен партти йертсе пынипе, йун тӑкса илнĕ ҫĕнтерӳсене тытса йулма пултарҫĕ.

Епĕр пролеттари тиктаттурин хĕҫ-пӑшаллӑ тĕрекне — Хĕрлĕ ҫара орканисатсилерĕмĕр. Пĕтĕм тĕнҫери тӑшмансем хĕсĕрлесе ҫавӑрса илнине хĕрлĕ ҫар ҫĕнтерсе пӑрахрĕ. Анҫах кӑпитталиссем халĕ те пĕр ҫарӑнмасӑр вӑрҫа хатĕрленеҫҫĕ. Совет сойусĕ ҫине ҫĕнĕрен тапӑнма меллĕ вӑхӑт кӑна кĕтсе тӑраҫҫĕ. Пирĕн сотсиалисӑм строиттĕлствин ҫитĕнĕвĕсем пуршуйсене тата та хытӑрах вĕҫĕхтереҫҫĕ. Епĕр ҫĕнĕ тĕнҫе тунине, ҫав тĕнҫере кӑпиталиссене вырӑн ҫуккине вĕсем аванах кураҫҫĕ. Пирĕн пилĕк ҫуллӑх план

пурнăçра пулса пыни ҫи тĕрĕс çул, поҫьшевиксен çулĕ иккенне пĕтĕм тĕнҫери рапоҫҫисем курассине кăпиталиссем лайăх ăнланаççĕ. Çавăнпа та кăпиталиссем пилĕк çуллăх плана пурнăça кĕртме мĕнле те пулсан ҫарса тăма тăрăшаççĕ.

„Епĕр сотсиалисăм тапхăрне кĕтĕмĕр“, терĕ Сталин йулташ.

Пилĕк çуллăх планăн иккĕмĕш çулĕнҫе пирĕн промышлĕннăç вăрçăҫҫенхинҫен икĕ хут ытларах протукси паҫĕ. Епĕр 2222 çĕнĕ савăт, 320 електритсă стантсисем туса лартрăмăр. Епĕр 20 пин километтăр тăрăшшĕ ҫукун çулĕ хыврăмăр. Хамăрăн промышлĕннăçа вăйлăлатнипе епĕр йалхуçалăхне сотсиалисăм йеннелле çавăрма пултартăмăр. Халĕ ĕнтĕ хресҫен хуçалăхĕсен виç пайĕнҫен пĕр пайĕ колхоссене пĕрлешнĕ. Талкишпех колхоса куçса пынă çĕрте епĕр кулаксене класĕпех пĕтерсе хурат..ăр.

Виççĕмĕш çул — пилĕк çуллăх планăн татăклă çулĕ. Пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш çулĕнҫе епĕр хамăр сотсиалисăмлă хуçалăхăн никĕсне хывса çитеретпĕр. Епĕр йăвăр промышлĕннăçа метталурки, çĕркăмрăкĕ машшинăсем тăвасси-

не пилĕк çулхи плана кăçалхи çул туса çитеретпĕр. 1931 çулта пилĕкçĕр çĕнĕ претприйаттисем туса пĕтерсе, вĕсем ĕçлеме тытăнаççĕ. Çак çулта пирĕн йалхуçалăх пĕтĕмпех урăхланмалла. 1400 машшинлă-трактăрлă стантсисем ĕçлеме тытăнаççĕ. Хресҫен хуçалăхĕнҫен çурри, тĕш-тырăллă районсенҫе 80 проҫҫăн колективланмалла.

Пирĕн çĕршывра сотсиалисăм çирĕпленет. Анҫах Хĕрлĕ çар шанҫăклă сыхласа тăрсан çеç епĕр сотсиалисăма вирлĕн туса пыма пултаратпăр.

Хĕрлĕ çар клас интересĕсене, ĕçхалăхĕсем çапăçса илнине сыхлаҭ. Вăл пролеттари тикттаттурине сыхласа тăраҭ. Улпутсенҫен туртса илнĕ çĕрсене, рапоҫҫи клас аллинҫе тăракан хапрăк-савăтсене, шахтăсене Хĕрлĕ çар упраса сыхласа тăраҭ. Кăпиталиссем пирĕн çĕршыври рапоҫҫисемпе хресҫенсене пăхăнтарас тесе, хăйсен влаçне туса хурас тесе кармашма тытăнсанах, Хĕрлĕ çар вĕсене çĕмĕрсе пăрахма йаланах хатĕр тăраҭ.

Акă ĕнтĕ мĕншĕн кирлĕ пире Хĕрлĕ çар. Вăл пролеттари тиктаттурин шан-

ҫӑкла вӑйӗ. Хӗрлӗ ҫар сотсиалисӑм строиттӗлствинҫе шанҫӑкла хуралҫӑ.

## Пролеттари тиктаттурин ҫарӗ.

Пуршуаҫиллӗ патшалӑхсӗнҫе ҫарта ӗҫхалӑхӗсем нумайтарах шутланаҫҫӗ. Анҫах



Мускаври Хӗрлӗ плошҫӑтре танксен параҫӗ.

вӗсен ҫарӗ рапоҫҫисемпе хресҫенсен тӑшманӗсемшӗн—кӑпиталиссемшӗн ӗҫлет.

Кӑпиталиссем ҫара хӑйсене сулесе тӑракан суккӑр хатӗр тума йепле пултараҫҫӗ-ха? Ирӗксӗрлесе улталаса анҫах.

Паллах ĕнтĕ, рапоҫҫи йе хресҫен хăй пурнăҫне кăпиталиссен тупăшĕсемшĕн парас темĕ. Ҫавăнпа та кăпиталиссем хăйсен ҫарĕсен класла сатаҫĕсене палăртмаççĕ. Пуршуаҫи интересĕсемшĕн ҫарсене вăрҫа ăсатнă ҫух вĕсем „ҫĕршыв“ тата „ҫĕршыва сыхласси“ ҫинҫен тутлă сăмахсем калаççĕ. Ҫав сăмахсем пуршуаҫи салтаксен пуçĕсене минретеççĕ.

Пирĕн ĕç ун пек мар. Пирĕн пролеттари тиктаттури, йе рапоҫҫи клас влаçĕ иккенне пытармастпăр епĕр. Ҫак влаç пуршуаҫийе пĕр хĕрхенмесĕр пусарма, пур пусмăрлăха, ҫуралăха пĕтерме, сотсиалисăм туса хума кирлĕ.

Епĕр пĕр пытармасăрах, пирĕн ҫар — класлă ҫар тетпĕр. Епĕр хамăр ҫара рапоҫҫисемпе хресҫенсен Хĕрлĕ ҫарĕ тесе калатпăр. Хĕрлĕ ҫара кайнă ҫух хăйсен тăван ĕçне сыхлама кайнине, хăйсен класлă интересĕсене хăтарма кайнине ĕçхалăхĕсем ăнланаççĕ.

Советсен пĕрремĕш сйесĕнҫе В. И. Леннин питĕ тĕлĕнмелле ĕç ҫинҫен каласа панă.

Хĕрлĕ ҫара ĕçхалăхĕсене анҫах илеççĕ. Присăв вăхăтĕнҫе кулаксемпе непмăн

ывăлĕсем хĕрлĕ çара ан лекҫĕр тесе совет оркăнĕсем çирĕп сыхлаççĕ. Вĕсене хĕрлĕ çарта тăрас вырăнне урăх ĕçсемпе улăштараççĕ. Вăрçă вăхăтĕнҫе вĕсене те оккопсем ҫавма тата ытти ĕçсем ĕçлеме уйрăм команта илеççĕ.

Ĕçхалăхсен тăшманĕсемшĕн Хĕрлĕ çар алăкĕ хытă питрĕннĕ. Хĕрлĕ çар ĕçхалăхĕсенҫен анҫах тăрат̆. Çавăнпа Хĕрлĕ çар рапоҫҫи клас ĕçĕсемшĕн вирлĕ, çирĕп тăрат̆.

Пирĕн Хĕрлĕ çар — вăл рапоҫҫисемпе хресҫенсен хĕçпăшаллă сойусĕ.

„Пирĕн Хĕрлĕ çарăн тата ҫи паллă йенĕ — вăл ирĕклĕхе тухнă рапоҫҫсемпе хресҫенсен çарĕ пулни, Хĕрлĕ çар вăл Окт̆апĕр револјутсин çарĕ, Хĕрлĕ çар вăл пролеттари тиктаттурин çарĕ“, тенĕ Сталин йулташ.

Акă ĕнтĕ ăçта Хĕрлĕ çарăн вăйĕ, унăн çирĕплĕхĕ, ăна никам та çĕнтерме пултарайманни.

## Халăхсен тăванлăх çарĕ.

Патша çарĕнҫе тăма йеврей, ҫăваш, тутар тата ытти вак халăхсен салтакĕсемшĕн питĕ те йăвăр пулнă. Вĕсен ҫĕл-

хинҫен, йăлисенҫен мăшкăласа кулни вĕсен ҫарти пурнăҫне ҫăтма ҫук йăвăрлантарнă. Патша влаҫĕ вак халăхсене ҫăтма ҫук хытă пусмăрлăхра тытнă. Патша пусмăрĕнҫе 200 вак халăха йахăн пурăннă. Вĕсене штыксемпе, саламатсемпе итлеттерсе пăхăнтарса тăратнă. Пусмăрлăхпа ҫуралăхра пурăнакан халăхсем патшана хирĕҫ тăтăшах ҫĕкленнĕ. Вак халăхсем аллисене пăшалсем тытсан вĕсене хăйсене пусмарлăхра тытса тăракансем йеннелле ҫавăрасран патша влаҫĕ питĕ хăранă. Вак халăхсене ҫара илсен патша влаҫĕ вĕсене тăван ҫĕршывĕнҫĕн айаккарах илсе кайма тăрăшнă. Пусмăрлăхра пурăнакан халăхсен салтакĕсем пĕр-пĕринпе канашласа пăлхавсем кăларассинҫен патша влаҫĕсем питĕ хăранă. Ҫавăнпа та вĕсем ҫарта вак халăх салтакĕсем пĕр ҫĕре нумайăн ан пухăнҫҫăр тесе хытă сыхланнă.

Пирĕн Совет сойусĕнҫе натси пусмăрлăхĕ ҫук. Пролеттари патшалăхĕ пур натсисен ĕҫхалăхĕсем те пĕр-пĕринпе пĕр тан пулса таҫă ҫыхăнса тăраççĕ. Совет влаҫĕ тавра СССР-ти мĕлйуншар халăхсем ҫирĕп пĕрлешсе килĕшӳллĕ пурăнаҫ-

çĕ. Çавăнпа Хĕрлĕ çарта та натсисене курайманни çук, вăл пулма та пултараймасť.

Краштăн вăрçи çулĕсенђе пур натсисен кăпиталисĕсене, улпутсене тата кулаксене хирĕç Хĕрлĕ çарта мĕн пур натсисен ĕçхалăхĕсем çапăçрĕç. Натсийе уйăрасси, вырăсмар халăхсен ђĕлхинђен, вĕсен йăлисенђен куласси — пурне те Хĕрлĕ çар ăшђикĕнђен кăларса сирпĕтесçĕ. Хĕрлĕ çар ретĕнђе 109 натси шутланаť. Хĕрлĕ çар вăл — Совет çĕршывĕнђи ĕçхалăх натсисен хĕçпăшаллă сойусĕ.

Совет патшалăхĕ Хĕрлĕ çарта уйрăм натсиллĕ пайсем тăваť. Хĕрлĕ çарта арменсен, тутарсен, круçинсен, уçпексен, украинтсăсен, пелоруссен тата ытти вак халăхсен пайĕсем те пур. Çав пайсем вађђи командирсем хатĕрлекен çар шкулĕсем те пур.

Натсиллĕ пайсенђе пур вĕрентĕве те тата политтĕклĕ вĕрентĕве те хĕрлĕ салтаксене хăйсен тăван ђĕлхипе вĕрентеççĕ. Çапла вĕрентнипе ĕçхалăхĕсем вăрçă ĕçне лайăхрах вĕренсе Совет сойусне сыхă тытма çирĕппрех хатĕрленеççĕ. Кăпиталис-

сем пирĕн çине тапăнсан, ăçта кирлĕ унта Совет сойусне натсиллĕ çар пайĕсем сыхлĕç. Айакри Хĕвелтухăçĕнҫе



Прийом пунктĕнҫе Хĕрлĕ çара ирĕклĕн кайма çырăнаççĕ.

китайсен шурă йăнăралĕсемпе çапăçнă вăхăтра натсиллĕ пайсем мĕн пур Хĕрлĕ çарпа пĕрле вирлĕн çапăçма пултарнине кăтартрĕç. Натсиллĕ пайсем туни Совет сойусĕнҫи мĕн пур натсисен ĕçхалăхĕсемшĕн Хĕрлĕ çара тата та тăванлăрах туса хурать.

„Хĕрлĕ çарăн паллă йенĕ — вăл пирĕн çар пулса тăни, Хĕрлĕ çар вăл ха-

лăхсен хушшинђи тăванлă çар, вăл пусмăрлăхра пурăнакан халăхсене ирĕке кăларакан çар“, тенĕ Сталин йулташ.

## Пĕтĕм тĕнђери револђутси çарĕ.

Пуршуаçиллĕ çарсенђе мĕн пур ытти халăхран тухнă салтаксене кураймасăр тăма вĕрентеççĕ. Пур ĕçхалăхсен те пĕр тăшман—кăпиталиссем иккенне ăнланманни пуршуаçийе питĕ кирлĕ.

Пирĕн Хĕрлĕ çар салтакĕ ĕçхалăх класне сыхлакан. Пĕтĕм тĕнђери ĕçхалăхсен интересĕ уншăн хаклă тата çывăх пулса тăраççĕ. Пĕтĕм тĕнђери пролеттарисен уйавĕнђе майăн пĕрремĕш кунĕнђе Хĕрлĕ çар салтакĕ ђаплă сăмах парать. Çав сăмахра хĕрлĕ салтак:

„СССР-ти мĕн пур ĕçхалăхсене тата пĕтĕм тĕнђери ĕçхалăхсен умĕнђе хамăн мĕн пур ĕçе, шухăша пĕр аслă ĕмĕт йеннелле—ĕçхалăхсене ирĕклĕхе кăларас çĕре хуратăп“, тет.

Çав аслă ĕмĕте хĕрлĕ çар салтакĕ, пĕтĕм тĕнђери пролеттарин револђутсиллĕ салтакĕ йаланах асĕнђе тытса тăрать. Краштăн вăрçинђе Хĕрлĕ çар çĕнтерђĕ,

мĕншĕн тесен ăна пур патшалăхри рапоҍҍисем пулăшрĕç. Империалиссем шуррисем ваљљи вăрçă хатĕрĕсене йанине рапоҍҍисем тийеме, турттарма хирĕçленĕ. Пире хирĕç çапăçма хушакан йут патшалăх салтакĕсемпе морексем хăйсен тăван Хĕрлĕ çар салтакĕсем çине тĕллесшĕн мар пулнă. Йут патшалăхри рапоҍҍисенҍен нумайĕшĕ Хĕрлĕ çар ретне хутшăнса фронтсенҍе шуррисемпе çапăçнă. Пĕтĕм тĕнҍери ĕçхалăхĕсем халĕ те СССР-а сыхласа тăраççĕ. Авкустăн 1-мĕшĕнҍе империалисăмлă çĕнĕ вăрçа хатĕрленнине хирĕç темонстратсисем пулнă. „Пурте Совет сойусне сыхлама хатĕр пулăр“, тейекен лосăнксемпе пуршуаçиллĕ патшалăхсенҍе рапоҍҍисем урама тухнă. Майăн 1-мĕшĕнҍе темонстратси вăхăтĕнҍе пур кăпиталисăм çĕршывĕсенҍи рапоҍҍисем СССР-а пĕтĕм тĕнҍери пролеттарисен тăван çершывĕшĕн çапăçма ҍаплă сăмах параççĕ.

Йут патшалăхсенҍи комуниссен парттисем Хĕрлĕ çарăн пайĕсене ҍылайăшне шефа илнĕ. Хĕрлĕ салтаксем кăпиталиссен тĕрмисене хупса лартнă рапоҍҍисене те шефа илнĕ. Хĕрлĕ çар вăй-хăваҍĕ —

пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисен йухăмĕпе таҫă ҫыхăнса тăнинҫе.

„Пирĕн ҫар интернатсионалисăмлă шухăшпа, йе урăхла каласан пĕтĕм тĕнҫери рапоҫҫисен шухăшĕпе вĕренет, ҫавăнпа та ĕнтĕ Хĕрлĕ ҫар, пирĕн ҫар, пĕтĕм тĕнҫери револютсин ҫарĕ, пĕтĕм ҫĕршыври рапоҫҫисен ҫарĕ“, тенĕ Сталин йулташ.

## Комуниссен партти — Хĕрлĕ ҫар ҫулпуҫĕ.

Комуниссен парттийĕ Октапĕр револютсиҫҫенех рапоҫҫи класăн хĕҫпăшаллă вăй-хăватне тума пуҫланă. 1905-мĕш ҫултах патша влаҫĕпе ҫапăҫмашкăн рапоҫҫисенҫен трушинăсем тунă. 1917-мĕш ҫулта патшана сирпĕтсе йарсан, польшевиксем пур хапрăк-савăтсенҫе те хĕрлĕ кварти отреҫĕсене орканисатсиленĕ.

Ҫав отретсене рапоҫҫи класăн ҫи шанҫăклă ывăлĕсем кайнă. Октапĕр револютси умĕнҫе Питĕрте 14 пин хĕрлĕквартейтсăсем пулнă. Ҫак вăхăтрах комуниссен партти патша ҫарĕнҫе питĕ хытă пикенсе ĕҫленĕ. Пайсенҫе польшевиксен йаҫейккисем орканисатсиленсе

пынӑ, салтаксен хаҫаҏӗсем ҫапӑнса туха пуҫланӑ. Октӑпӗр револӭутси умӗн салтаксен хушшинҏе полӭшевиксем 30 пине йахӑн шутланса тӑнӑ.

1917 ҫулта октӑпӗр уйӑхин малтанхи кунӗсенҏе полӭшевиксем йертсе пынипе хӗрлӗ кварти пуршуаҫипе татӑклӑ ҫапӑҫма пуҫларӗ. Салтаксемпе матруссем рапоҏҏисемпе пӗрле ҫапӑҫнӑ. Ҫапла Октӑпӗр револӭутси кунӗсенҏе рапоҏҏи-хӗрлӗ-квартейтсӑ тата салтак-хресҏен пӗр-пӗринпе ҫирӗп ҫыхӑну туса хуҏӗҫ.

Ҫав рапоҏҏисемпе хресҏенсен сойусӗ комуниссен партийӗ йертсе пынипе 1917 ҫулта октӑпӗр уйӗхӗнҏе ҫӗнтерсе хуҏӗ. Анҏах вырӑс пуршуаҫийӗсемпе улпутсем хӗҫпӑшалӗсене пӑрахмарӗҫ. Йут патшалӑхри кӑпиталиссем пулӑшнипе вӗсем Совет влаҫӗпе ҫапӑҫма пуҫларӗҫ. Ҫак ҫапӑҫун йӑвӑрлӑхӗсене хӗрлӗ квартин малтанах тӳсмелле пулҏӗ.

Хӗрлӗ квартин отреҏӗсем вӑрҫӑ хатӗрӗсем тӗлӗшӗнҏен питӗ ҏухӑн пулнӑ. Хӗрлӗ квартейтсӑсем вӑрҫӑ ӗҫне те вӗренмен пулнӑ. Вӗсен пуҫлӑхӗсем те йапӑх, хӑйсен ӗҫне пӗлсех ҫитейменнисем пулнӑ. Анҏах револӭутсиллӗ ӑнлану пур-

рипе тата комуниссен партти йертсе пынипе, шурă, квартейтсăсен отређĕсемпе револђутсийе хирĕç тăракан йăнаралсĕне хĕрлĕ кварти çĕмĕрсе тăкрĕ. Ун хыççăн вара Советсен респуплĕкĕсене хирĕç йут патшалăхсенђи империалиссен çарĕсем тапăна пуçларĕç. Вара хĕрлĕ кварти вăйхалĕ çителĕклĕ мар пулђĕ.

Октăпĕр револђутси çĕнтерĕвĕсене сыхласа тăма вара партти йаланах хатĕр тăракан çар тăвас тесе шут тытрĕ.

Хĕрлĕ çар йăвăр тапхăрта аталанса пынă. Империалисăм вăрçи пирĕн мĕнпур çĕршыва йухăнтарса хăварђĕ. Хуçалăх пĕтĕмпех ишĕлсе анђĕ. Выçлăх та пуçланђĕ. Ĕçхалăх массисем вăрçăран ывăнса çитрĕç. Тăшмансем пур йенђен те хупăрласа çывхарса пынă. Украйнăна нимĕç çарĕсем йышăннă, Архынкĕлскра акăлђансем ларнă, Атăл çинђе ђехсем пулнă. Йут патшалăхри империалиссем пулăшнипе револђутсийе хирĕç пыракансем вăй пуçтарса пур йенђен те хĕстерсе пынă.

Совет влаçĕн йулашки кунĕсем тата сехеђĕсем йулђĕç, тесе шутланă тăшмансем.

Хĕрлĕ çара тăшман хĕстерсе пынă вăхăтра туса пымалла пулнă.

Совет çĕршывĕ вăрçăллă лакĕр пулса тăђĕ. Пирĕн промышлĕннăçăн пур ĕçĕ те, ђукун çулсен, пĕтĕм хуçалăх вăрçнă çĕре кăна кайса тăђĕ.

Партти комуниссене фронта пиншерĕн йађĕ. Комуниссем хастарлăн, пĕр пăркаланмасăр, вирлĕ тўсĕмлĕхсемпе тистиплинăпа фронтсенђе çапăçрĕç. Пирвайхи ретсенђе çапăçса хастарлăхпа тăрăшăва тытса вĕсем хăйсен хыççăн хĕрлĕ салтаксене йертсе пынă.

Партти хăй вăйĕсене ђи хăрушă вырăнсене салатнă. Комунис-салтаксем пур çĕрте те йаланах малти ретсенђе пулнă. Краштăн вăрçи фронђĕсенђе комуниссем аллă пин вилсе пĕтрĕç.

„Çапăçура хĕрнĕ тимĕр пек çирĕп парттисĕр пуçне, çавăн пек кĕрешĕве ăнăçлă йертсе пыма май çук“, тенĕ В. И. Ленин, краштăн вăрçи вăхăтĕнђе комуниссен партти тивĕçлĕхĕ çинђен.

Комуниссен партти тўсĕмлĕ йертсе пынипе кăна Хĕрлĕ çар çĕнтерме пултарнă.

Хаљхи, сывлăш çавăрнă çулсенђе, кăпиталиссем кашни кунах тапăнма пултарнă вăхăтра, партти пирĕн хĕçпăшаллă вăйа тĕреклетет, пирĕн çĕршывра вăрçă ĕçне тĕреклетет

Комуниссен парттийĕ Хĕрлĕ çарта пролеттари çулйĕрне пурнăçа тĕрĕс çирĕп кĕртсе пыраť. Çапла йертсе пынипе пролеттари шанђăклă тĕрекĕ, пуршуаçийе ђĕтретекен аслати, тĕнђере пĕртенпĕр рапођђисемпе хресђенсен Хĕрлĕ çарĕ çирĕпленсе, тĕрекленсе пыраť.

**Хĕрлĕ çара политтĕк тĕлĕшпе вĕрентесси.**

Хĕрлĕ çарта политтĕк тĕлĕшпе вĕрентў çинђен Ленин çапла çырнă.

„Пирĕн çĕнтерўсем Хĕрлĕ çар ретĕнђе партти тата куљттурăллă сутта кăларас ĕç вирлĕн тăрăшса тăвăнса пынипе кăна пулђĕç“.

Хĕрлĕ çарти политтĕклă ĕç рапођђисемпе хресђенсен сойусне çирĕплентереť.

Кашни ĕçхалăхĕ çара пырсанах пурне те çителĕклĕ ăнлансах пĕтеймест, тата политтĕк тĕлĕшĕнђен те пурне те

пӗлсех кайаймасҭ. Хӗрлӗ ҫар клас тӗлӗшӗнҭен таҭӑрах сыхӑнса тӑтӑр тесен, питӗ пысӑк политтӗклӑ ӗҫ кирлӗ. Хаљхи вӑхӑтра, клас керешӗвӗ питӗ хытӑ ҫивҭӗленсе ҫитнӗ ҭух,—политтӗкла ӗҫ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҭ.

Кӑпиталисӑм йулашки ҫине епӗр хытӑ пусма пуҫларӑмӑр, талкишпех коллективлас майпа кулаксене класӗпех пӗтерсе хума пуҫларӑмӑр. Сотсиалисӑм строиттӗлствине хирӗҫ кулак, непмӑн тата сӑтӑрҫӑсем урса кайсах ҫапӑҫаҫҫӗ. Пирӗн ҫершывӑн вӑйхӑватне, пултарулӑхне пӗтерес тесе весем тӗттӗмрех хӗрлӗ салтаксене хӑйсем майлӑ ҫавӑрасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ. Анҭах политтӗк тӗлӗшӗнҭен пирӗн хӗрлӗ салтак вӗреннӗ ҫын пулнипе кулаксене тӗпӗ йӗрӗпех хупласа хума пултараҭ.

Пире мӗн пур йенҭен кӑпиталиссем хупӑрласа тӑнӑ вӑхӑтра епӗр сотсиалисӑм тӑватпӑр. Пирӗн тӑшмансем — пӗтӗм тенҭери капиталиссӑм Совет сойусӗ ҫине тапӑнас тесе меллӗ вӑхӑт кӑна кӗтсе тӑраҫҫӗ. Политтӗклӑ ӗҫ мӗн пур хӗрлӗ салтаксене тӑшмансем йавӑнса, ҫаврӑнса ҫӳренине сыхласа тӑма пулӑшаҭ. Кӑпи-

талиссем тапăнни хĕрлĕ çаршăн кĕтмен çĕртен сасартăк пулас çук. Пирĕн кашни хĕрлĕ салтаках империалиссем тапăннине пĕтерсе пăрахма йаланах хатĕр тăрать. Пирĕн револђутсиллĕ тистсиплинă хĕрлĕ салтаксен политтĕклă ăнкару çинђе тĕрекленсе тăрать. Политтĕклă ĕç Хĕрлĕ çарăн вăрçă ĕçне лайăх хăпартма пулăшать.

Краштăн вăрçи вăхăтĕнђе пирĕн çарта политтĕклă ĕç питĕ вăйлăђђĕ. Çавăнпа кашни хĕрлĕ салтаках ĕçхалăхĕсен тăшмананĕсемпе çапăçма витĕр пĕлсе тăнă. Çак тăнланупа пирĕн Хĕрлĕ çар халђ те питĕ тĕреклĕ тăрать. Хĕрлĕ çарта политтĕкла ĕçе парттипе тата комсомол йађейккисем, политруксем, кăмиссарсем тата комантирсем ĕçлесе пыраççĕ.

Комуниссен йађĕйккисем кашни ротрах орканисатсиленнĕ. Çав йађейккăсенђе парттире тăракан пур хĕрлĕ салтаксем, комантирсем, политтĕк ĕçне туса пыракансем тăраççĕ. Партти кашни комунисах ытти хĕрлĕ салтаксем умĕнђе вăрçă вăхăтĕнђе те вăрçă çук ђухне лăпкă вĕреннĕ вăхăтра та примерлă пулма хушать. Фронтра комунисăм наступлени

тунă ђух ђи малти ретре тăмалла. Вăрçă çук ђух ђăтăмлăх тистсиплинĕ тата хăй ĕçĕсене тунă тĕлĕшре комунисăн примерлă пулмалла. Вăрçă ĕçне тата политĕк ĕçне вĕреннĕ ђух комунис утарнĕк пулса вĕренмелле. Партти йађейккисем тавра пур хĕрлĕ салтаксен массисем пуçтарăнса тăраççĕ.

Сотсиалисмăлă ăмăртупа утарнĕкле ĕçсене пуçарса хăпартса йарас тĕлĕшре партти йађейккисем малта тăраççĕ. Йађейккăсен уçă пуххисем урлă хĕрлĕ салтаксем партти ĕçĕсемпе паллашса политтĕклă ĕçе хутшăнаççĕ. Партти йађейккисем йертсе пынипе мĕн пур опђăллă орканисатсисем ĕçлесе пыраççĕ. МОПР, Осоавиахим, Турăсăрсен йађейкки тата ытти опђăллă орканисатсисем кашни пайрах пур. Кашни хĕрлĕ салтаках çав орканисатсисенђен йе пĕринђе йе иккĕшĕнђе ĕçлесе тăрат̆.

Политтĕклă вĕренў урлă пирĕн хĕрлĕ салтак мĕншĕн вăл çапăçнине, мĕншĕн вăрçă ĕçне вĕреннине лайăх пĕлсе тăрат̆.

Кашни кунах пур пайсенђе те хĕрлĕ салтаксен политтĕклă вĕрентўсем

пулса пыраççĕ. Хĕрлĕ салтаксем çав вĕрентӳре Хĕрлĕ çар çинҫен, Совет влаçĕн политтĕкĕ çинҫен тата йут патшалăхри рапоҫҫисемпе хресҫенсен çапăçăвĕ çинҫен пĕлсе тăраççĕ.

Çыру пĕлмен хĕрлĕ салтаксем хушшинҫе питĕ нумай ĕçлеççĕ. Йулашки вунă çул хушшинҫе хĕрлĕ çар 600 пин çын ытла çыру вĕрентнĕ.

Рапоҫҫипе хресҫен Хĕрлĕ çартан çыру пĕлекен, тăнлă çын пулса килне таврăнаť.

Пушă вăхăт пулсан, Хĕрлĕ салтак вăхăтне йе Ленин кĕтессинҫе йе полк клупĕнҫе ирттерет. Кунта кĕнеке, хаçат, тĕрлĕ вăйăсем, мусăк пулнипе хĕрлĕ салтак хăй канмалла вăхăтне усăллă, ăслă ирттерет. Тата çакăнтах тĕрлĕрен крушоксем ĕçлеççĕ, калаçусем пулаççĕ, çпектаккăлсем лартаççĕ.

Партти йертсе пыракан çтена хаçаҫĕ кашни ротрах пур, унта хĕрлĕ салтаксем çырса тăраççĕ. Çтена хаçаҫĕсем çине çĕр пин ытла хĕрлĕ салтаксем çырса тăраççĕ. Çтена хаçаҫĕсем пайсенҫе вăрçă ĕçне хăпартма, тисттиплинăна çирĕплетме пулăшаççĕ. Çтена хаçаҫĕсем

самокриттĕк урлă вăрçă ĕçне вĕреннĕ ĕç-
ри, йăлари опҫă ĕçĕнҫи çитменлĕхсене
пĕтерме пулăшаççĕ.

Политтĕклă вĕрентў хĕрлĕ салтака
тăнлă тата сотсиалисăмшăн пĕтĕм пуçне
хурса тĕрĕс çапăçакан çын тăваť.

Парттин тĕп çул-йĕрне пĕтĕм Хĕрлĕ
çар хапăл туса тăраť.

## Хĕрлĕ комантирсем.

Патша çарĕнҫе салтаксем рапоҫҫисем-
пе хресҫенсенҫен пулнă. Анҫах „сăрă
выљăх“ шутĕнҫе тăракан салтаксем ах-
витсерсен аллиҫе пулнă. Улпутсемпе
кăпиталистенҫен пуçтарнă ахвитсерсем
урлă, патша правиттĕлстви пĕтĕм çара
хăй аллинҫе хытă тытса тăнă. Рапоҫ-
ҫипе хресҫен нихçан та ахвитсер пулма,
вăрçă шкулне кĕме пултарайман.

Пур пуршуаçиллĕ çарсем те çавăн
пекех. Пусмăрлăхра тăракан ĕçхалăх
массисем унта кăпиталиссемшĕн тупă
йетрисем кăна пулса тăраççĕ. Пур пур-
шуаçиллĕ çарсенҫе те салтак массисем-
пе комантирсем хушшинҫе пысăк уйрăм-
лăх пур. Унта ăхвитсерпе салтак пĕр-
пĕринпе — клас ташманĕсем.

Пирĕн командирпе хĕрлĕ салтак ĕç-халăх хушшинҫен тухнă. Вĕсен интере-сĕсем пĕр пек. Вĕсем рапоҫҫисемпе хресҫенсен влаçне сыхлама йаланах ха-тĕр.

Пирĕн командирсенҫен çурри ытла— комунисçем.

Пирĕн çарăн пуçлăхĕ СССР Реввой-енсовет претçетаттĕлĕ Ворошилов йул-таш та, Лукан хулинҫи рапоҫҫи, вата поҙшевик пулса тăрат. Çарти командир-сен вырăнĕсенҫе рапоҫҫипе хресҫенсен массисем хушшинҫен тухнă революутсил-лĕ кĕрешӳре пиçнĕ пролеттари коман-тирĕсем тăраççĕ.

Пуршуаçиллĕ çарсенҫе салтак ахвит-сертен ҫура пек хăраса ҫĕтресе тăрса вĕренет. Кам патша çарĕнҫе тăнă, çав ахвитсерсем хĕнхур кăтартнине, йанах-сенҫен тыттара тыттара йанине, вăрçса харкашнине лайăх астăват пулмалла.

Паллах ĕнтĕ, Хĕрлĕ çарта кун пек-кине тупма çук. Пирĕн çарта тимĕр пек хытă тисттиплинă туса хунă. Анҫах вăл пуршуаçиллĕ çĕршывсенҫи тистсиплинă пек мар. Саламат мар, асаплантар-нисенҫен ҫĕтресе хăраса тăни

мар, хӗрлӗ салтак тӑнлӑхӗ—акӑ ӗнтӗ пирӗн тистсиплинӑн тӗп никӗсӗ. Хӗрлӗ ҫарӑн кашни салтакӗйех хӑйсен аслисен хушнине вӑхӑтра туса памалла. Анђах вӑл асаплантарассинђен хӑранипе мар итлет. Хӗрлӗ салтак хӑй ӗҫне пӗлсе, вӑл мӗне тата мӗншӗн тунине ӑнланса тӑвать. Хӗрлӗ салтакпа комантир пӗр пӗрне хисеплеҫҫӗ. Пирӗн ҫарти револјутсиллӗ тистсиплинӑ пуршуаҫиллӗ ҫарсенђи ђура тистсиплининђен нумай ҫирӗпрех.

Патша ҫарӗнђе салтак йаланах тӑмсаланса хӑравҫӑ пулса тӑрађђӗ. Урамра вӑл минутсеренех „ђесть парађђӗ“, тата пуҫлӑх умӗнђӗ „фронта кайнӑ ђухнехи пек“ тӑрађђӗ. Ахвитсер умӗнђе салтак ларма пултарайман. Салтак транвайсемпе ҫӳреме пултарайман, тӗаттӑрсене, клупсене, лексисене ҫӳреме пултарайман. Пирӗн хӗрлӗ салтаксем тата комантирсем хӑйсен пушӑ вӑхӑта пӗрле ирттереҫҫӗ. Вӗсем клупра калаҫусем тӑваҫҫӗ, вулаҫҫӗ, тӗрлӗрен веђђӗрсем тӑваҫҫӗ. Комантирсемпе хӗрлӗ салтаксем йулташлӑ пӗр ҫемйере пурӑнаҫҫӗ.

Икӗ ҫул кайалла маневӑра кайсан пӗрре ҫакӑн пек ӗҫ пулнӑ. Вӑрҫӑ сатађ-

не тунă ҫух, полк шыв урлă каҫнă. Кĕпер кивĕ пулнă. Пĕр урапи пĕрененe ҫакланнă та шыва ӳкнĕ. Урапапа пĕрле шыва виҫĕ хĕрлĕ салтак ӳкнĕ. Вĕсенҫен



Қомантир советсене суйлас кампани ҫинҫен ăнлантарать.

иккĕшĕ ишме пĕлнĕ, виҫҫĕмĕш ишме пĕлменнипе путма тытăнă. Ҫав вăхăтра кĕпер урлă каҫнине астуса тăракан кăматир кĕпер ҫинҫе пулнă. Шыва путакан хĕрлĕ салтака курсанах вăл ăна хăтарма шыва сикнĕ. Вара хĕрлĕ салтака шыва путса вилесрен хăтарнă. Йĕпенсе шăн-

са кайнă полк комантирĕ çавăн хыççăн та ĕлĕкхи пекех каçарассине пăхса тăнă.

Комантир хăй пурнăçне шеллемесĕр теветкĕлленсе хăйне пăхăнса тăракан хĕрлĕ салтака хăтарасшăн тăрăшни пĕр пуршуаçиллĕ çарта та пулма пултараймасть. Апла пулма мар, унти ахвитсерсем хăйсен асаплантарĕвĕсемпе салтаксене хăйсене-хăйсем çапăнса вилме патне çитереççĕ.

Пĕр класлă шухăшпа тата хĕрлĕ салтаксемпе комантирсем тăванлă, килĕштерсе пурăнни-акă ĕнтĕ ăçта хĕрлĕ çарăн вăй-хăвачĕ.

## Хĕрлĕ çарта вăрçă ĕçне вĕрентни.

Хĕрлĕ çар Совет сойусне кăпиталиссем тапăнасран сыхласа тăрать. Кăпиталиссем пĕр чарăнмасăр вăрçма хатĕрлеççĕ. Вĕсем хăйсен çарне çĕнĕ вăрçă техникипе вăйлăлатаççĕ. Аэроплансемпе танксен шучĕ вĕсен ўснĕçемĕн ўссе пырать. Кăпиталиссем çапăçма химиллĕ йапаласем хатĕрлеççĕ. Автомопилсемпе мотторсен шутне ўстереççĕ. Кăпиталиссем хĕстернине çĕнтерсе хурас тесен Хĕрлĕ çарăн питĕ лайăх хĕçпăшалланса вĕрен-

нĕ пулмалла. Хĕрлĕ çарăн хăватлă вăрçă технĕкки пулмалла.

Интустри çитĕнĕвĕсем Хĕрлĕ çарăн вăй-хăватне çирĕплетеççĕ. Пирĕн промышлĕннăç ӳсни çара технĕккă тĕлĕшĕнђен хăпартма май парат̆. Епĕр хамăр патăрта автомопилсем тата трактăрсем тума пуçларăмăр. Çакă вара вĕсене Хĕрлĕ çара туйантарма май пађĕ. Пирĕн сывлăш флођĕ те ӳссе пырат̆. Пирĕн самољотсемпе танксем тăваççĕ. Арттилери лайăхланђĕ, пулемет шуђĕсем те ӳсрĕç. Хими ĕçĕнђе пысăк çитĕнӳсем пур. Хаљхи вăхăтра пирĕн вăрçă промышлĕннăçĕ ђи шултра кăпиталисăмлă çĕршывсенђинђен вăйсăртарах, анђах хамăрăн çывăх кӳршĕсен Пољшă, Румыни тата ыттисен технĕккине епĕр паранмастпăр.

Хĕрлĕ çарăн вăрçăллă вăй-хăватне партти тĕрĕс Ленинла политтĕкпа йертсе пынипе анђах вăйлăлатма май пулнă. Сылтăм оппортуниссем çĕршыва интустрилеме тата йалхуçалăхне коллективлама васкама хушмасђĕç. Ехерте партти сылтăм оппорттуниссем хушнă пек тунă пулсан, пирĕн йăвăр промышлĕннăç пулас çукђĕ тата Хĕрлĕ çара та епĕр çĕнĕ

технĕккă пама пултараймастăмăр. Сылтăм оппортуниссене партти хытă персе хуçрĕ. Партти тĕп çулне пурнăçа кĕртсе, Совет сойусĕнђи ĕçхалăхĕсем сыхлăх ĕçне тĕреклетрĕç.

Кăпиталиссем Совет сойусĕ çине тапăннине пĕтерсе хурас тесен, пирĕн çара технĕккă вăйĕпе хăватлантарни кăна питĕ сахал. Çав технĕкка пурĕн те çавăрса илес пулаť, унпа мĕнле усă курмаллине тата тыткалама вĕренес пулаť. Хĕрлĕ салтакран халђ нумай пĕлӳ ыйтаççĕ. Вăл лайăх вĕреннĕ çын тата технĕккă çинђен пĕлекен пулмалла. Вăл хăй хĕçпăшалне питĕ лайăх пĕлмелле. Хĕрлĕ çар технĕкка хăй аллине питĕ ăнăçлă çавăрса илсе пыраť.

„Пољшевиксем илме пултарайман креппăçсем çук“, тенĕ Сталин йулташ. Хĕрлĕ çарта хĕрлĕ салтак комантирсене пĕтĕм пайсен строиттĕлствинђе пулăшса тăраť. Хĕрлĕ салтаксен пуххисенђе политтĕклă ыйтусемсĕр пуçне вăрçă ĕçне вĕренес ыйтусем тата пайри куллен-кунхи йăла ыйтăвĕсене те сӳтсе йаваççĕ. Çтена хаçађĕ урлă хĕрлĕ салтак кирек мĕн çинђен те сĕнӳ пама тата пур çит-

менлӗхсем ҫине кӑтартма та пултарать. Пирӗн хӗрлӗ салтак Хӗрлӗ ҫар сыхлӑх пултаруллӑхне хастарлӑ, тӑнлӑ туса пыракан ҫын.

Сотсиалисӑмлӑ ӑмӑртупа утарнӗкле ӗҫлесси, вӗренесси Хӗрлӗ ҫарӑн сыхлӑх, вӑрҫӑ пултарулӑхне ҫирӗплетекен тӗп сулӗсем пулса тӑраҫҫӗ.

Хӗрлӗ салтаксем — утарнӗксем, вӑрҫӑ ӗҫне вӗренес прокрамсене срукран маларах лайӑхрах тата ђасрах вӗренсе тухаҫҫӗ.

Сӑмахран, 252-мӗш полкри хӗрлӗ салтаксем — утарнӗксем 15 минут хушшинђе тӑвас оккопсене 6 минутра туса хунӑ. Ҫыхӑнса тӑмашкӑн пӗр километтӑра пралӑк тӑсма 15 минут кирлӗ, хӗрлӗ салтаксем — утарнӗксем ӑна 7 минут хушшинђе тӑснӑ. Тупӑсенђен пеме хатӗр пулма 10 минут кирлӗ, — арттилерире тӑракан утарнӗксем тупӑсенђен пеме 4 минут хушшинђе хатӗр пулса тӑраҫҫӗ. Вӑрҫӑ ӗҫне лайӑхрах вӗрентес тӗлӗшре утарнӗксем нумай лайӑх сӗнӳсем параҫҫӗ.

Айакри хӗвелтухӑҫӗнђи китайсен шурӑ йӑнралӗсемпе кӗрешнӗ ђух Хӗрлӗ ҫар

хăйин политтĕклă тăнлипе тата вăрçă ĕçне лайăх вĕреннине кăтартрĕ.

## Хĕрлĕ салтак — сотсиалисăм тăвакан.

Кăпиталиссем çар ĕçхалăхĕсемпе çыхăнса тăрассинђен хăраççĕ. Çавăнпа вĕсем салтаксемпе рапођђисем хушшинђе курайманлăхпа тăшманлăха сарасшăн тăрăшаççĕ. Пирĕн Хĕрлĕ çар пур ĕçхалăхĕсемпе те тађă çыхăнса тăрать. Пирĕн катăрлă пайсене хĕрлĕ салтаксене икĕ çуллăха илеççĕ. Патша правиттĕлствин салтаксене касармăсенђе нумайтарах усраса, вĕсене ĕçхалăхĕсенђен пĕтĕмпех уйăрса хăйне итлесе тăракан хĕçпăшала çавăрасшăн пулнă. Пирĕн слушпă срукне кĕске тунă, анђах вăрçă ĕçне вĕренме халђ тата та йăвăртарах. Совет влаçĕ кун çинђе кăна ђарăнса тăмасть. Хĕрлĕ çарăн пысăк пайĕ территториллĕ пайсенђен тăрать. Территориллĕ пайсенђе тăракан комантирсемпе хĕрлĕ салтаксем нумайах тăмаççĕ. Комантирсемпе хĕрлĕ салтаксен ытти пайĕсем тествиттĕлни вăрçă слушпинђе пилĕк çул шутланса тăрса кашни çулах кĕске сруклăха вăрçă ĕçне вĕренме пуçтарăнаççĕ. Территориллĕ йĕрке пулнипе

ĕçхалăхĕсем кĕске сруклăха кăна хăйсен ĕçĕнђен пăрăнса вăрçă ĕçне вĕренеççĕ. Территториллĕ çиçтемă мĕлйуншар ĕçхалăхĕсемпе çара çирĕп çыхăнтарса тăраť. Хĕрлĕ çар рапођђи класпа çыхăнса тăрасси тата шефа илнĕ урлă вăйлăланса тăраť. Рапођђисем — шефсем ђас-ђасах касармăсене çуреççĕ. Рапођђисен клупĕсенђе хĕрлĕ салтаксене йаланах куратпăр. Хĕрлĕ çар пайĕсем шефа илнĕ хапрăк-савăтсемпе вăрçă ĕçне вĕрентекен плана тата промфинплана лайăхрах пултарас тесе пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухаççĕ.

Çарта слушиť тунă вăхăтра хĕрлĕ салтак пролеттари патшалăхĕн пĕртан тăракан краштăн пулса тăраť. Политтĕклă ĕç урлă вăл йаланах пĕтĕм çĕршыв ĕçĕнђе ĕçлесе пыраť. Хĕрлĕ салтак хăйин претставиттĕлĕсене советсене суйлаť. Суйланнă теппутатсем советсен çектсисенђе тата комиççисенђе ĕçлеççĕ. Вырăнти суттсене хĕрлĕ салтаксем хăйсен хушшисенђен халăх саççетаттĕлĕсене суйлаççĕ.

Хĕрлĕ çар салťакĕ клас кĕрешĕвĕ фронтне питĕ ђăтăмлă пулса, сотсиализăм строиттĕлствинђе малта пыракан çын пулса таврăнаť. Çартан кайас умĕн сот-

сиалисӑм строиттӗлствинҗе ӗҫлеме хатӗрлес тесе хӗрлӗ салтаксемпе уйрӑм ӗҫлеҫҫӗ. Хӗрлӗ салтаксенҗен трактӑриссем, коппературсире ӗҫлекенсем, вуламалли ҫурт пуҫлӑхӗсем, йалккорсем тата ытти катӑрсем хатӗрлес тесе курссем туса иртереҫҫӗ. Йулашки иртнӗ ҫулсенҗе ҫартан таврӑннӑ хӗрлӗ салтаксем темиҫе ҫӗр колхоссем орканисатсиленӗ. 1930-мӗш ҫулта курссем урлӑ хӗрлӗ ҫарта 100 пин ытла колхоссенҗе ӗҫлекен ҫынсене хатӗрленӗ. Курссенҗе 30 пин трактӑриссене вӗрентсе кӑларнӑ.

Хӗрлӗ салтак ҫартан йала таврӑнсан җухӑнсене пӗрлештерес тӗлӗшре партти йаҗейккин җи лайӑх пулӑшакансем пулса тӑраҫҫӗ. Кулаксемпе кӗрешес ӗҫре хӗрлӗ ҫарта пулнӑ салтаксем малти ретре пыраҫҫӗ. Йал хуҫалӑхне коллективлас тӗлӗшре Хӗрлӗ ҫартан таврӑннӑ ҫынсем ӗҫе пуҫаракансем пулса тӑраҫҫӗ. Хӗрлӗ ҫартан таврӑннӑ ҫынсем колхоссем нумай орканисатсилленӗ. Колхос хирӗсенҗе вӗсем утарлӑ ӗҫсен пултарулӑхне кӑтартаҫҫӗ.

Вӑтаҫӗр хура тӑпра оплӑҫӗнҗи Петропавлӑвск районӗнҗи хӗрлӗ ҫарта пулнӑ

çынсем Ворошилăв йулташ патне нумайах та пулмасӗ çыру йанă:

„Хаклă йулташ Ворошилов!

1930 çулта çĕнӗапĕрĕн 1-мĕшĕнђе хамăр хуттăрти 6 киле колхоса илтĕмĕр. Çав 6 кил йулашки харпăрлă хуçалăхсемђђĕ. Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм хуттăр колхосра. Епĕр йăвăр кĕрпе хĕле пурăнса ирттертĕмĕр. Кулаксем колхоса хирĕç пулса, ăна салатса йарасшăнђђĕ. Епĕр сиккеленмерĕмĕр, мĕншĕн тесен партти тата ăна йĕртсе пыракан Сталин йулташ каланисене епĕр итлерĕмĕр те вĕсем хушнă пек турăмăр. Хамăр коллективлă хуçалăха епĕр сарсı тĕреклетсе пыратпăр. Пухура пĕтĕçтерсе хунă план тăрăх ĕçлесе пыратпăр. Çĕртме тумашкăн 6 кун хунăђђĕ — 6 кунта пĕтертĕмĕр; çумсене çумлама — 16 кун хунăђђĕ — 8 кун хушшинђе çумласа пĕтертĕмĕр; хĕвелçаврăнăça касма — 4 кун хунăђђĕ, — 2½ кунта касса пĕтертĕмĕр; ыраша — 5 кунта вырса пĕтермелеђђĕ — ăна 3 кунта пуçтартăмăр; çур тыррисене — 8 кунта пĕтермеллеђђĕ, 6 кунта пуçтартăмăр. Сталин йулташ каланă пек пирĕн ĕç хаваслă, мĕншĕн тесен вăл — коллективлă, сотси-

алисăмлă. Пирĕн ытлашши тырă пур, ан шикленĕр, епĕр кулака йăлăнас çук. Пур ытлашши тырра та патшалăха паратпăр, пилĕк çуллăх плана тăватă çулта туса пĕтернĕ ђух тырă питĕ кирлĕ“, тесе çырнă.

Хĕрлĕ çарта пулнă йулташсем сотсиалисăмлă йулхуçалăхĕнђе акă ĕнтĕ мĕнле ĕçлесе пыраççĕ. Хĕрлĕ çартан таврăннă йулташсем хулана станоксем патне таврăнсан, ђи хастарлă утарнĕксен ретне тăрса ĕçлеççĕ. Хаљ Хĕрлĕ çартан хĕрлĕ салтак патша вăхăтĕнђи тĕттĕм ним пĕлмен салтак пек таврăнмасť. Хĕрлĕ çартан сотсиалисăма хастарлă тăвакансем таврăнаççĕ. Çамрăк, ђас-ђасах çыру та нађар пĕлекен хресђене, патрака тата рапођђине Хĕрлĕ çар политтĕклă пурнăçа хутшăнтараť. 1930 çулта 9 уйăхра комуниссен партти ретне 44 пин ытла хĕрлĕ салтак кĕнĕ. Кунсăрăн пуçне 61 пин çын комсомола кĕнĕ. Хĕрлĕ çар сотсиалисăмшăн ђăтăмлă çапăçакансене кăна мар вĕрентет. Сотсиалисăм строиттĕлствишĕн кĕрешекен хастарлă çынсене Хĕрлĕ çарта çĕршер пин хатĕрлеççĕ.

Хĕрлĕ салтак вăл—сотсиалисăм тăвакан.

## Хӗрлӗ ҫарӑн вӑрҫӑ пултарулӑхне ҫирӗплет.

„Сотсиалисӑм строиттӗлствине ҫар ҫирӗплет анҭахҫав вӑхӑтрах



4-мӗш ӳкерҭӗк. Хӗрлӗ салтаксем йалхуҫалӑх машшинисене йусаҫҫӗ.

СССР-ӑн сыхлӑх ӗҫне те ҫирӗплет“, ҫапла ҫырнӑ Ворошилов й. Пирӗн ҫар пысӑк мар, йышлӑ мар. Кӑпиталиссем тапӑннине ҫӗнтерсе хурас тесен, вӑрҫӑ ӗҫне пирӗн Хӗрлӗ ҫара кӑна мар, мӗн пур ӗҫхалӑхне вӗрентмелле. Ҫак ӗҫе хӑй ретӗнҭе 9 мӗлйун ҫын шутласа тӑракан

осоавиахим орканисатси туса пырат̆. Хапрăкра, колхосра, кашни йăлтах вăрçă ёçне вĕрентекен крушоксем ĕçлемелле, вăрçă кĕтессисем тумалла. Совет союсне хирĕç пулас вăрçăра кăпиталиссем сывлăш флоҫĕпе химиллĕ йапаласемпе усă курса çапăçĕç. Çавăнпа сывлăш флоҫĕпе химиллĕ йапаласенҫен хăтăлмашкăн питĕ хытă тăрăшса вĕренмелле. Рапоҫҫисем—исопретаттĕлсем пирĕн вăрçă технĕккине лайăхлатма пулăшмалла. Пĕтĕм ĕçхалăхне, вăрçă ĕçне вĕрентни пирĕн хĕрлĕ çара çирĕп пулăшу парат̆.

Кăпиталиссем пирĕн çине тапăнмашкăн питĕ хытă хатĕрленеççĕ. Вĕсен хуçалăхĕ криçĕс пирки йăтăнса анат̆. Кăпиталисăм çĕршывĕнҫи ĕçхалăхĕсем хăйсене кирлĕ таварсене сутăн илме пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем илсе тăракан ĕçукçи выçăллă-тутăллă пурăнма кăна çитсе тăрат̆. Çавăнпа кăпиталиссем хăйсен таварĕсене ниçта та сутаймаççĕ. Вĕсем происвотствăна ҫакарса рапоҫҫисене урама кăларса ы ăтаççĕ. Кăпиталисăм çĕршывĕсенҫе хаљ 35 млйун рапоҫҫисем ĕççĕр тăрса йулнă. Нумайтарах тупăш илес тесе кăпиталиссем рапоҫҫи-

сен ĕçукçине ђакараççĕ, вĕсене талăкне 10—12-шер сехет ĕçлеттереççĕ. Пољшшăра хĕш-пĕр шахтăсенђе ĕç кунне 14 сехете çитернӗ.

Анђах кăпиталиссем хĕстерсе пынине рапођђисем хирĕç тăраççĕ. Пуршуаçиллĕ çĕршывсенђе револ̌утси йухăмĕ ӳссе пырай̆. Пĕтĕм тĕнђери ĕçхалăхсем пирĕн пек тăвасшăн. Пирĕнпе пĕрле сотсиалисăм тăвас тесе пĕтĕм тĕнђери рапођђисем кăпиттал влаçне сирпĕтсе йаама хатĕрленеççĕ. Пирĕн сотсиалисăм строиттĕлствин çитĕнĕвĕсем пĕтĕм тĕнђери кăпиталисăм вилес кунне çывхартаț.

Акă ĕнтĕ, мĕншĕн кăпиталиссем Совет сойусĕ çине тапăнасшăн хытă васкаса хатĕрленеççĕ.

Нумайах та пулмасț П. П. П. У. (О. Г. П. У.) „промышлĕннăй партти“ текен контрреволђутсиллĕ орканисатси уçрĕ. Çав орканисатсире пирĕн уђрештенисенђе слушиț тунă вата спетсиалиссем тăнă. Вĕсем йут патшалăхри кăпиталиссем тата йут патшалăха тарнă вырăс кăпиталисĕсем хăтăрса тăнипе ĕçлесе тăнă.

Франтси кенералĕсемпе кăпиталисĕсĕм конттрреволюутсионерсене пĕтĕм вăйне хурса сотсиалисăм строиттĕлствине сăтăр тума хушнă. Вĕсем пилĕк çуллăх плана пурнăçа кĕртме ђарасшăн пулнă. Кăпиталиссен Совет сойусĕпе кĕрешни ăнса пытăр тесе сăтăрçăсем тĕрлĕ майсем хатĕрлесе пынă. „Промышленнăй партти“ пуршуаçиллĕ франтсус правиттĕлствине пирĕн хĕçпăшаллă вăйсем çинђен вăрттăн çветенисене парса тăнă. Франтсус кенералĕсем тата шуррисем сăтăрçăсемпе пĕрле Совет сойусĕ çине тапăнма план тунă.

Контрреволюутсионерсен ĕçĕсене пролеттари влаçĕ сисрĕ. Пролеттари суђĕ сăтăрçăсене пĕр хĕрхенмесĕр сут туса хупса хуђĕ. „Промышленнăй парттийе“, Меншевиксен активлă оркан исатсине — „сойусное пӳро“ туса хурса „промпарттипе“ пĕрле сăтăрсем туса пынă. Совет сойусĕ çине вăрçăпа тапăнас тесе тăрăшакансене пролеттари суђĕ йăлтах çĕмĕрсе пăрахрĕ. Пĕтĕм тĕнђери пролеттарисем интересĕсене сутакан меншевиксен ĕçĕсене тĕпĕйĕрĕпех кăтартрĕ.

Мĕншевиксене сут туни çав вăхăтрах пĕтĕм тĕнђери пуршуаçисен тарçисене— сотсиалпретаттĕлсене сут туни пулђĕ.

Кăпиталиссен тата вĕсене кĕрĕшнĕ тарçисен—меншевиксен, сăтăрçăсен планĕсем татăлђĕç. Пирĕн çине вăрçăпа тапăнас тенине кайалла хăвармалла пулђĕ.

Анђах Совет сойусĕ кунтан-кун тĕрекленсе пынине кăпиталиссем ăнланаççĕ. Çавăнпа пирĕн çине вăрçăпа тапăнас тĕлĕшпе вĕсем питĕ хытă васкаççĕ.

СССР çинђен кăпиталиссем тем те пĕр йурăхсăр сăмахсем сараççĕ. Вĕсем хăйсен хаçаđĕсем çинђе пирĕн патăрта крепăс прави вăхăтĕнђе манирлĕ „ирĕксĕр ĕçлеттереççĕ“,—тесе çыраççĕ. Епĕр тĕне хĕстеретпĕр çавăнпа кăпиталиссем пирĕн çине çăварĕсене карсах кăшкăраççĕ. Епĕр пуршуаçиллĕ патшалăхсем çине тапăнасшăн теççĕ вĕсем. Çак пур суйа сăмахсемпе кăпиталиссем тата вĕсен шанђăклă тарçисем сотсиал-соклашаттĕлсем ĕçхалăхсене урмăштарса йаласшăн тăрăшаççĕ. Çапла суйса шавлани айĕнђе вĕсем Совет сойусне хирĕç вăрçăпа тапăнма питĕ вăйлă хатĕрленеççĕ.

Епĕр хирĕç çапăçма хатĕр пулмалла.

Сталин йул. пĕтĕм сойусри Советсен иккĕмĕш сйесĕнӡе çапла каланă:

„Епĕр кăпиталиссене çĕнтерсе вĕсенӡен туртса илнĕ вăхăт нумайах тăсăлма та пултараймĕ, тесе Ленин пĕр хут кăна каламан. Хĕрлĕ çара çирĕплетсе лайăхлатасси пирĕн парттин паллă сатаӡĕсенӡен пĕри пулса тăрать, тесе вăл темиçе хут та каланă. Йулташсем, хамăр хĕрлĕ çара, хамăр хĕрлĕ флота çирĕплетме вăйа хĕрхенмĕпĕр, тесе сăмах парар“.

Çапла сăмах панине кашни ĕçхалăхĕ йаланах астуса тăрас пулать. Комуниссен партти йертсе пынипе Совет сойусĕнӡи, тата пĕтĕм тĕнӡери ĕçхалăхсем сотсиалисăм çĕршывĕн сыхлăхне çирĕплетмелле. СССР-а хирĕç пыракан вăрçă пĕтĕм тĕнӡери кăпиталиссене хирĕç тăракан вăрçă çавăрăнса каййма пултармасан, кăпиталиссем пирĕн çине тахçанах тапăннă пулĕӡӡĕç. Хĕрлĕ çар вăй-хăваӡĕ тата пирĕнпе пĕтĕм тĕнӡери ĕçхалăхсем сыхăнса тăни вĕсене ӡарса тăрать.

Хĕрлĕ çар Совет çĕршывне хурал тăрса хытă сыхлать.

Хăкĕ 15 пус
Цена 15 коп.

Н. ХАРИТОНОВ
Красная армия — страж советов
Перевод Е. КОМИССАРОВОЙ

На чувашском языке

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО
Чебоксары, Красная площадь